Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 58 (4627) *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 23-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*

## Хирсене апатлантарни усă кӳрĕ

**"Тухăç-98" пресс-центр пĕлтерет**

Районти хирсенче кукуруза тата сахăр кăшманĕ акса пĕтереççĕ. Сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнче тата "Кондурча" ассоциацире сахăр чĕкĕнтĕрне акма палăртнă лаптăксене пĕрремĕшĕсем пулса вĕçленĕ. Хресченсен хуçалăхĕсен "Киклĕ", Мичурин ячĕпе хисепленекен, Кузнецов ячĕпе хисепленекен, Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Рассвет", "Заря" ассоциацийĕсенче сахăр кăшманне чылай лаптăк çине акнă. Вĕсенчен пĕрремĕшĕсенчен тăваттăшĕнче, çаплах "Кондурча", "Алга", "Татарстан" хуçалăхсенче кукурузăна силослăх чылай лаптăксем çине акнă. Çав вăхăтрах кĕрхи культурăсене минераллă удобренисемпе иккĕмĕш хут апатлантарас ĕç те сарăлнăçемĕн сарăлать. Çак ĕçре Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Родина", "Заря", Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем уйрăмах палăрнă. Хуçалăхсене çак тĕллевсемшĕн аммиак селитрипе тивĕçтерес тĕлĕшпе район ертӳçисем сахал мар вăй хунă, халь ăна хуçалăхсем "Агрохимсервис" базинчен турттараççĕ. Анчах та ку ĕçре хуçалăхсем пурте пĕр пек активлăх кăтартмаççĕ çав. Тухăçшăн тăрăшакан хуçалăхсенче çурхи культурăсем акнă анасене те апатлантарма тытăннă ĕнтĕ. Кунта та Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциаци малта пырать. Хуçалăхра 150 гектара тымартан апатлантарнă. Çак ĕçе хресченсен хуçалăхĕсен Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, "Родина", "Кондурча", "Заря" хуçалăхсенче те тытăннă.

## Виçĕ норма - чикĕ мар

Хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнчи **Геннадий ПЕТРОВ** пĕр кунра 40 гектар сахăр кăшманĕ акса, смена нормине 333 (!) процент пурнăçланă.

Çак хуçалăхри **Юрий ЛЕВАКОВ** тăпрана пусăрăнтарнă çĕрте икшер норма пурнăçласа, çак ĕçе 400 гектар ытла лаптăк çинче пурнăçланă.

* * *

"Алга" ассоциацири **Алексей ЕЛЬЦОВ** пĕр кунра 90 гектар çинчи тăпрана пусăрăнтарса смена нормине 280 процент тултарнă пулсан, икшер норма пурнăçлакан **Шаукат МИНДУБАЕВ** ку ĕçе 450 гектар çинче пурнăçланă.

## Кун йĕркинче - выльăх апачĕ хатĕрлесси

Майăн 21-мĕшĕнче районти ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕнче хуçалăхсен тĕп инженерĕсем хутшăннипе канашлу пулчĕ, ăна, тĕпрен илсен, выльăх апачĕ пухса илекен техникăна хатĕрлес ыйтăва халалланăччĕ. "Гостехнадзор" инспекцийĕн начальникĕ Р.Сатдаров канашлура тухса каласса, выльăх-чĕрлĕх апачĕ хатĕрлекен техникăна юсас ĕçе хăвăртлатмаллине, çав вăхăтрах тыра пухса кĕртекен комбайнсене юсамаллине, вĕсене механизаторсене çирĕплетмеллине палăртрĕ. Çаплах вăл акакан техника упрама лартмалли çинчен асăрхаттарчĕ.

Канашлу ĕçне район администрацийĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев малалла тăсрĕ. Вăл хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх апачĕ хатĕрлекен техникăна юсассине кирлĕ пек тимлĕх уйăрманнине палăртрĕ. Çавна тĕпе хурса хăш-пĕр хуçалăхсене критиклерĕ те. Июнĕн 5-мĕшĕччен апат хатĕрлекен мĕнпур техника хатĕрлĕх линейки çине лартмалли, çаплах витаминлă курăк çăнăхĕ авăртакан агрегатсене майламалли , вĕсене электромоторсемпе, çуламалли-сĕрмелли материалсемпе тивĕçтермелли çинчен каларĕ.

Канашлу ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн начальникĕ Ф.М.Давлетшин пĕтĕмлетрĕ.

## Советсен ертӳçисем канашлаççĕ

Нумаях пулмасть вырăнти самоуправленин Совечĕсен председателĕсем хутшăннипе иртнĕ канашлăвăн йĕрки çав тери çирĕпчĕ. Аялти влаçсен ĕçĕ-хĕлĕ çителĕклĕ, анчах чи кирлисене палăртма тăрăшмалла. Хальхи вăхăтра кусем - уй-хирсенчи çурхи ĕçсене йĕркеллĕ ирттересси, кĕрхи культурăсен анисене таптассине хирĕç кĕрешесси, ялсене çӳп-çапран тасатасси тата вĕсен территорийĕсене тирпей-илем кĕртесси. Çак ыйтусене хускатрĕç хăйсем тухса калаçнинче администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев, аппарат ертӳçи Ф.Р.Ногуманова, халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн председателĕн çумĕ А.Н.Ельченков, район прокурорне пулăшакан А.С.Гильманов, А.С.Ахметшин архитектор. Нурлатри ПЧ начальникĕ И.И.Курамшин май уйăхĕнчи пушарсен пăшăрхантаракан статистикине илсе кăтартрĕ, ЦГСЭН тĕп врачĕ И.В.Андаров шыв çăлкуçĕсене тирпей-илем кĕртесси çинчен аса илтерчĕ, сĕт-çу комбиначĕн директорĕ М.К.Камалетдинов уйрăм хушма хуçалăхсенчен сĕт пухассине йĕркелес енĕпе самоуправлени органĕсем ĕçленине тишкерсе тухрĕ. Унта çаплах БТИ начальникĕ И.М.Фахреев, культура пайĕн заведующийĕ Р.Н.Яруллин тата РОО заведующийĕ Г.А.Юнусов сăмах тухса каларĕç.

*Ака-98*

## Пурте пĕрле тăрăшса

Хирти ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Ана хĕррине тухсан Николай Кириллов трактора чарчĕ те çĕр çине сиксе анчĕ. Ăна кĕтсе тăнă пекех, çав вăхăтрах агрегат патне вăрлăх тиеме оборудованиленĕ ГАЗ-53 пырса çитрĕ, удобрени тиекен те хăйĕн черетне кĕтсе тăратчĕ. Ăна нумаях кĕтме тӳр килмерĕ - вăрлăхпа тата удобренипе кирлĕ таран тиеннĕ агрегат татах хире васкарĕ. Паллах ĕнтĕ, механизаципе пачах урăхла, алă вĕççĕн витрепе тиесси мар.

- Хуçалăхра вăрлăх тиекен икĕ агрегат пур. Удобрени тиеккеннисемпе те икĕ çул усă куратпăр ĕнтĕ, вĕсене те хамăр ĕçченсемех турĕç, - ăнлантарчĕ хресченсен хуçалăхĕсен "Родина" ассоциацийĕн тĕп агрономĕ В.Н.Сандрюхин. Вăл Анатолий Евгеньевич Павлов газоэлектросварщикпа çав вăхăтра механик пулса ĕçленĕ Владимир Викторович Сандрюхин çинчен калать. Халь акă механизаторсем вĕсен ĕçĕпе кăмăллăн усă кураççĕ: удобрение çĕре тăккаламасăр хăвăрт тиеççĕ, агрегат та кĕтсе тăмасть, кăçал ку уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Николай Владимирович Кириллов пушă вăхăт кăшт пулсан та ахаль тăраймасть, хăйĕн экипажне хире илсе тухас тесе тăрăшать. Çакăн пек ĕçчен те çаврăнăçуллă пулнăшăн ăна хуçалăхра хисеплеççĕ. Хирте вăл 1986 çултанпах вăй хурать, юлашки 4 çул акать. Иртнĕ кĕркунне кĕрхи культурăсене 315 гектар акма та ăна шанса панă. Вăл кĕрхи культурăсене хĕресле мес-



летпе пĕччен акса пĕтернĕ, калчасене апатлантарнă, акнă хирсем лайăх хĕл каçнă, 15 гектарне кăна хушса акма тӳр килнĕ.

Çапла йĕркеллĕ пыраççĕ "Родина" хуçалăхра хирти çурхи ĕçсем. Агромероприятисем пуçлансанах виçĕ кооператив та ирхи çурхи культурăсен участокĕсем çине тухнă. Малтан пĕрчĕллĕ культурăсене акассине хăвăртлатма тĕллев лартнипе çĕр ĕçченĕсем пурте Н.Н. Кузнецов ертсе пыракан "Черемшан" кооператив хирĕсенче ĕçленĕ. Акана икĕ сменăпа йĕркеленĕ, ĕç укçине чек системипе тӳлеме калаçса татăлнă. Пĕрчĕллĕ культурăсене акнă, кĕрхи культурăсене апатлантарнă çĕрте Ю.В.Бондарев, А.П.Кольцов, культивациленĕ çĕрте В.Егоров, С.Галанцев, сӳреленĕ çĕрте А.Михайлов кунĕн-çĕрĕн вăй хунă. Вăрлăх турттаракан А.Т.Васильев шофер та талăкĕпех хирте пулнă. Ку бригадăра ĕçе вĕçленĕ хыççăн механизаторсем Р.М.Мифтахов ертсе пыракан "Яна тормыш" кооператива куçнă. Унта вĕсем кукуруза акма пуçăннă, "Союзра" вара - сахăр кăшманĕ. Ĕçе йĕркеллĕ илсе пыма вара хуçалăхра пĕтĕм условисем



пур: ытти хуçалăхсемпе танлаштарсан, "Родинăри" техника паркĕ тĕреклĕрех, юсавлă. Механизаторсем тракторсене пысăк пахалăхпа юсанă (ку ĕçе вĕсем пĕтĕмпех хăйсем пурнăçланă), çавăнпа та вĕсем питех çĕмĕрĕлсе тарăхтармаççĕ. Техника енчен тивĕçтерекен бригада та пĕр кăлтăксăр ĕçлет, газоэлектросварщиксем, слесарьсем талăк тăршшĕпех дежурствăра тăраççĕ. Çунтармалли-сĕрмелли материалсемпе тивĕçтерекен машина водителĕ С.Питуганов, автобус шоферĕ В.Егоров та механизаторсем патĕнчен кайман: техникăна хиртех горючипе тивĕçтернĕ, акаçăсем валли вĕри апат кӳрсе панă, механизаторсен сменине улăштарнă. Пĕр вăхăтра хуçалăх ертӳçисем "Сĕнче" ассоциацие тата ялавăрсене техникăпа пулăшма та вăхăт тупнă. Халь механизаторсем кĕр тыррисене иккĕмĕш хут апатлантараççĕ, чĕкĕнтĕр акаççĕ, çитес çывăх вăхăтра выльăх апачĕсене пухса илекен техникăна хатĕрлеме пуçăнĕç, мĕншĕн тесен çураки хыççăн вĕсемшĕн хĕрӳ утçи пуçланать. Ялсем çăва кĕреççĕ, ку тапхăрта вара ĕçхĕл пĕтмест, пĕрне пурнăçласа пĕтерейместĕн теприне тытăнмалла. "Родина" ассоциацире çакăн çинчен лайăх пĕлеççĕ тата малашлăх агромероприятисене пурнăçлас шухăшпа пурăнаççĕ.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

**Ӳкерчĕкре: Н.Кириллов; Е.Евдокимов, К.Зиннуров, С.Юсупов акаçăсем.**



*– Нумаях пулмасть-ха, ашшĕ-амăшĕсем ачине система лартмалла тесен пăшăрханса ÿкетчĕç. Анчах та халь вара вăл усăллă пулнине нумайăшĕ ăнланаççĕ, çавăнпа та пирĕн Халидан ĕçĕ питĕ нумай, – тет районти тĕп больницăри ача-пăча уйрăмĕн заведующийĕ С.Ш.Бикметова.*

*Халида Галиаскаровна кунта медсестра пулса пурĕ те виçĕ çула яхăн кăна ĕçлет-ха, çапах та коллектив хисепне тивĕç пулма ĕлкĕрнĕ. Халида система тата укол тăвать, çаксене вара пурне те пысăк яваплăх туйса пурнăçламалла, çав вăхăтрах ырă кăмăллă пулмалла, ачасене юратмалла. Халида Галиаскаровна вара çак мĕнпур пахалăхсемпе палăрса тăрать. Вăл лайăх хатĕрленнĕ специалист, ырă кăмăллă çын.*

*Ÿкерчĕкре: процедура медсестри Х.Г.Тямаева.*

# Çулла ăçта канмалла?

Май уйăхĕн пуçламăшĕнче районти вĕрентÿ пайĕ шкул ачисен çуллахи канăвне йĕркелес ыйтусене халалланă семинар ирттерчĕ, унта шкул директорĕсен воспитани ĕçĕ енĕпе ĕçлекен çумĕсем хутшăнчĕç. Семинарта районта тăван кĕтесе тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕç пуçарас, туристла çулçÿревсем йĕркелес ыйтусемпе РОО заведующийĕ Н.Х.Абдуллин тухса калаçрĕ:

- Çу тапхăрне сахал мар мероприяти палăртнă. Çулталăк хушшинче тăван кĕтесе тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе шкулсен музейĕсен ĕçĕсен конкурсне ирттернĕ. Пĕрремĕш тапхăр итогĕсене майăн 20-мĕшĕнче пĕтĕмлетнĕ, юлашкине республикăра кĕркуннехи уйăхсене палăртнă. Вĕренекенсен задачисене çаплах ялсенче палăксемпе обелисксене йĕркеллĕ упрасси, чечексем акса ÿстересси кĕни çинчен асăнтарчĕç.

Кăçал Тутарстанта ачасен юхăмне йĕркеленĕренпе 75 çул çитет. Ку енĕпе майăн 18-20-мĕшĕсенче столицăра республика сборĕ пулнă. Çав уява пирĕн районтан та 5 çын хутшăннă, çав шутра иккĕшĕ - ачасен юхăмĕн ветеранĕсем, икĕ еткерçĕ тата Тутарстан еткерçисен организацин 1 ертÿçи. Ачасемпе çамрăксен центрĕ çумĕнчи "Лидер" лагерь ертсе пынипе Тутарстан еткерçисен икĕ кунхи слечĕ иртет.

Çуллахи тапхăрта ачасем валли тĕрлĕ лагерьсем йĕркелĕç. Чи малтан ялсенче шкул çумĕнчисем ĕçлессине планланă. Кусем вĕренекенсен ĕçпе кану лагерĕсем пулĕç, унта хуçалăхсен социаллă страховани отраслĕпе пĕр-пĕрин хушшинче расчетсем туса апатлантарассине йĕркеленĕ.

Хулари сакăр шкул çумĕнче уçăлакан кану лагерĕсене илес пулсан, апатлантарассине регионаллă страховани фончĕн шутĕнчен йĕркелĕç. Унсăр пуçне, ачасене профсоюз лагерĕ "Заречный" йышăнма шутлать.

Ачасен канăвĕшĕн ашшĕ-амăшĕсен взносĕ лагерь категорийĕнчен килĕ тата путевка хакĕ 10 процентран тытăнса 25 процента çити шутланĕ.

Çуллахи тапхăрта аслă классенче вĕренекенсене Раççейри тата республикăри лагерьсене кайма путевкăсем кĕтеççĕ, çаплах Финляндие тата Франци туристла çулçÿревсем йĕркелеме май пур.

Кĕскен каласан, семинарта çак мĕнпур ыйтусем тĕлĕшпе тĕплĕ калаçу пычĕ.

# Газ питĕ меллĕ

## Çакна кашни ăнланать, анчах пурте пĕр пек тăрăшмаççĕ

Район ертÿçисем хулара тата ялта газ кĕртессине хăвăртрах вĕçлес тесе мĕнпур вăйне хума тăрăшаççĕ. Пĕлтĕр çак ĕçе республикăра кăна мар, çывăх регионсенче те чапа тухнă хăватлă организаци - "Востокмонтаж" акционер обществине явăçтарнă. Вăл пуçăннăранпа ĕç чылай малалла шуни палăрать. Пирĕн тахçанхи партнерсем те алă усса лармаççĕ - пĕрлехи вăйпа, паян районăн кашни кĕтесĕнче тесен те юрать, газ пăрăхĕсем хывас, ГРП монтажлас, çуртсене газ парас тĕлĕшпе ĕç пырать. Çавна пула кăçалхи 4 уйăхра 69 километр пăрăха хута янă, яллă вырăнсенче - палăртнă чухлĕ, газ 1 пин çурта тата хваттере кĕртнĕ. Анчах çак ĕç хăвăртлăхĕсем халлĕхе çырлахтармаççĕ, хăшпĕр ялсенче пилĕк-ултă çурта кăна кĕртнĕ, кайран вара ĕçе хăй тĕллĕн янă. Администраци пуçлăхĕ ăна яланах тĕп тимлĕхре тытать, çавна май тĕрлĕ шайра калаçусем ирттерет, пысăк пĕлтерĕшлĕ килĕшÿсем тăвать. Унăн çумĕ Н.Б.Мулюков та ку ыйтăва çĕклемен кун иртмест. Иртнĕ эрнере çавăн пеккисенчен пĕринче подрядчиксемпе тата ытти ятарлă организацисен ертÿçисемпе газификаци ыйтăвĕсем тĕлĕшпе канашлу иртрĕ, тепĕр кунне - заказчиксемпе - хуçалăхсен тата вырăнти самоуправленин Совечĕсен председателĕсемпе.

Унта ĕçлĕ калаçу пычĕ, вăл усăллă пуласса шанатпăр. "Востокмонтаж" газовикĕсем кăçал ял тĕлĕшпе палăртнă программăна чылай ирттерсе пурнăçлама - пурĕ 3,5 пин çурта тата хваттере газпа çыхăнтарма шутлаççĕ. Программăна пурнăçлас тĕллевпе район ертÿçисем тĕрлĕ мерăсем йышăнаççĕ, çапла, тĕп, поселоксем хушшинчи, урамсенчи газопровод валли пăрăхсем, тĕрев материалĕ, ГРП валли оборудовани шырассинчен хуçалăха хăтарнă. Çавăнпа та ертÿçĕсем вырăнсенче проектпа смета документацине хатĕрлессишĕн, газовиксене пурăнмалли вырăнпа тата апатпа тивĕçтерессишĕн тăрăшмалла, ытти ыйтусене те тĕп тимлĕхре тытмалла. Паллах, хуçалăхсен председателĕсен ахаль те ĕç нумай, газификаци валли вăхăт çитмессе те пултарать. Çавăнпа та кашни хуçалăхра çак ĕçшĕн яваплă çынна палăртсан аван пулмалла. Унсăр пуçне, кашни хуçалăхра газ хуçалăхĕшĕн ятарлă пĕлÿ туяннă, строительствăпа монтаж ĕçĕсене ирттернĕ тапхăрта техникăна тĕрĕслесе тăракан пулмалла. Хăш-пĕр хуçалăхсенче юлашки çак икĕ ыйту çине сÿрĕккĕн пăхнипе паян хатĕр газопроводсене газ парасси чарăнса тăрать. Унсăр пуçне, газопроводсен пăрăхĕсене вăхăтлă сăрласси те хуçалăхсен тивĕçĕсене кĕрет. Çак ĕçе вăраха тăснин усси çук, пăрăхсене сăрламасăр газ памаççĕ вĕт.

Тата тепĕр пĕлтерĕшлĕ самант. Газификацилессипе "шалти" ĕçсене пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнпур ĕçсем район ертÿçисем тата вырăнсенчи ертÿçĕсем çине тиенеççĕ. Газа уйрăм çуртсене вара вĕсен хуçисем хутшăнмасăр пама çук. Кунта вара пĕтĕмпех финанссенчен килет. Ахаль те бартерпа е кивçен ĕçлеме хăнăхнă газовиксене конкретлă çурта газ кĕртнĕ чухне вĕсен ĕçне кăшт та пулин тÿлеме ыйтнăшăн айăплама юрамасть. Çак укçа-тенке самоуправленин вырăнти Совечĕсем пуçтармалла. Чăнах та ĕнтĕ, кÿршĕсем газпа усă курма тытăннишĕн савăннине кура укçа-тенкĕ хăвăртрах тупма тăрăшакансем те сахал мар. Анчах та пĕр урама темиçе хутчен çÿреме газовиксен вăхăт та, май та çук. Çавăнпа та çутçанталăк газĕ кĕртес текенсен укçа çинчен малтанах шутламалла. Тата тепĕр самант. Хăш-пĕр вată çынсем "çут тĕнчере пурăнасси нумаях юлмарĕ тесе" газ кĕртес ыйтупа çыхланас темеççĕ. Çавăнпа та вырăнти самоуправленин Совечĕсем газ кĕртес текен тата кĕртес темен çемьесен реестрне хатĕрлесе ăна газовиксене памалла.

Ватă çынсене газ кăмакисем хаклă пулни тата газпа çыхăнтарнипе тăкаксем тухни хумхантарать. Вĕсем çакна пĕлмелле: пысăках мар çуртсенче (25 тăваткал метр ытларах пулмасан) ахаль кăмака-каланккă туса унта горелка вырнаçтарма пулать. Горелкăн хакĕ газ кăмакинчен темиçе хут йÿнерех (300 тенке яхăн), каланккă хăпартма пысăк кăмакана çĕнĕрен оборудованилессинчен çăмăлтарах. Çавăнпа та кăмăл пуррисен хăвăртрах проект бюровĕпе çыхăнмалла.



## Шкул пурнăçĕнчен



# "Телейлĕ самант"

Кăмăл пулсан тата тăрăшсан, каçсене ирттермелли тĕрлĕ формăсемпе усă курма пулать. Çапла, пирĕн хулари 4-мĕш номерлĕ шкул учителĕ Гаяз Мингазевич Тазиев Г.Тукая халалланă каçа телевизорпа кăтартакан тата чылайăшне килĕшекен "Телейлĕ самант" евĕрлĕ йĕркелерĕ. Çав кун 10 "А" тата 10 "Б" классенче вĕренекенсем ăмăртрĕç, поэт пурнăçĕпе творчестви çинчен вун-вун ыйту çине хуравларĕç. Ачасем Г.Тукайăн биографине тата произведенийĕсене лайăх пĕлни те савăнтарать. Çивĕч ăмăртура 10 "Б" класс команди çĕнтерчĕ, унта икĕ Лейсан - Закировапа Кутузова тата Рушан Фарраховпа Салават Гималетдинов кĕчĕç.

Темăри ыйтусемсĕр пуçне, район, республика историне тивекеннисене те пачĕç.

Каç питĕ хаваслă иртрĕ, ачасем юрларĕç, ташларĕç, çаплах Тукай сăввисене вуларĕç.

**Р.ГИНЯЕВА.**

# Вĕренеççĕ тата хаваслă канаççĕ

Тĕкĕрмелĕнчи вăтам шкулти ачасем вĕренме кăна мар, канма та пĕлеççĕ. Вĕсен пушă вăхăтне усăллă ирттерессишĕн Зоя Васильевна Машарова учительницăпа аслă вожатăй Валентина Алексеевна Улангина тăрăшаççĕ, вĕсем пĕрле тĕрлĕ каçсем: "Кĕрхи бал", "Брейн-ринг", "Атьăр-ха, каччăсем!", "Атьăр-ха, хĕрсем!", "Сăваплă Валентин кунĕ", "Çемье уявĕ", юристсемпе, студентсемпе тĕлпулусем ирттереççĕ.

Çапла, нумаях пулмасть кунта "Кил хуçи хĕрарăмĕ" конкурс интереслĕ иртрĕ, ăна ĕçпе физкультура учительници Татьяна Максимовна Машарова ертсе пычĕ. Конкурса "Девчата" (11 класс), "Весна-98" (9 класс), "Ромашка" (8 класс) командăсем хутшăнчĕç. Конкурса хутшăнакансен кĕвентепе шыв йăтма, салмана вĕтĕ касма, прическăсем туса вĕсене ят пама, тортсем пĕçерме, мода кăтартма, ташлама пĕлнине кăтартмаллаччĕ. Ăмăртура "Весна-98" команда çĕнтерчĕ. Çĕнтерÿçĕсене парнесем пачĕç.

* * *

Хам эпĕ çак шкулти ачасене тутарла вĕрентетĕп. Вĕренекенсене ку предмет килĕшет, вĕсем тутарла калаçма пĕлмеççĕ пулин те, уроксенче вырăсла текстсене тутарла е тепĕр май куçарма тăрăшаççĕ. Ачасем пурте сăпайлă та йĕркеллĕскерсем. Кунта педагогсен коллективĕ те туслă та килĕштерсе ĕçлет, вĕсем пĕрле савăнма та, хуйхăрма та вĕреннĕ. Çакăн пек çынсемпе ĕçлеме те кăмăллă.



**Р. НАБИУЛЛИНА,**
**Тĕкĕрмелĕнчи шкулта тутар чĕлхине вĕрентекен.**

# Кĕнекепе туслашма вĕрентетпĕр

Майăн 27-мĕшĕнче çĕршыври библиотекарьсем хăйсен официаллă уявне - Пĕтĕм Раççейри Библиотекăсен кунне паллă тăваççĕ. Шăп кăна çуркунне, пурте чечеке ларнă тата çĕнĕ пурнăçпа пурăнма тытăннă вăхăтра. Библиотекарьсем çуркуннене сăнарлаççĕ, пĕлĕве, çĕнĕ пуçарусене пурнăç параççĕ, çынсене культура енчен пуянлатаççĕ вĕт.

Библиотекарьсем ĕлĕк-авалтанах обществăн ăстăн пуянлăхне пуçтаракансем тата упракансем кăна мар, çаплах кĕнекесене пĕлекенсем, унпа усă куракансене пулăшакансем пулнă. Библиотекарĕн тивĕçĕ çавăн пек.

Нурлатри централизациленĕ библиотека системине тĕп библиотека, ача-пăчасен библиотеки, хулари 1-мĕш номерлĕ филиал тата ялсенчи 47 филиал кĕреççĕ.

1998 çулта 35265 вулакана тивĕçтернĕ, 447402 çын çӳренине регистрациленĕ, 8036 библиографи справкине пурнăçланă, кĕнеке фондĕнче 445439 экземпляр шутланать.

Тĕп библиотекăра хальхи вăхăтра хăй тĕллĕн ĕçлекен тăватă пай, вĕсен ĕçĕ пĕр-пĕринпе çыхăннă: литературăна комплектлакан тата ĕçлесе хатĕрлекен пай, кĕнекесене упракан тата системăри кĕнекесене улăштаракан пай, методикăпа библиографи пайĕ, вулакансене тивĕçтерекен пай.



Майăн 27-мĕшĕнче библиотекарьсен професси уявĕ кăна мар, вулакансен праçникĕ те. Хăть мĕнле библиотека та вулакансемшĕн ĕçлет вĕт. Библиотекăра вĕсем валли мĕнпур условисем туса памалла, ăна пĕрлехи тăван кил тума тăрăшмалла. Çапла тăвасси çинчен вара уяв кунĕсенче кăна мар, кашни кун, кашни сехетре шухăшламалла. Ку вăл библиотекăра ĕçлекен кашни çыннăн тĕп тĕллевĕ. Ăна пурнăçлама пире музыка шкулĕн, 99-мĕш ПТУ коллективĕсем, хулари шкулсенчи учительсем пулăшаççĕ. Çамрăксен пайĕпе пĕрле библиотекăра çамрăксен интеллектуаллă "Урикс" клубне уçнă, унта кашни эрнере иртекен занятисенче хулари шкулсенче вĕренекенсем тĕл пулаççĕ, уйăхра пĕрре вара питĕ кăсăк интеллектуаллă вăййасем ирттереççĕ.

Хальхи вăхăтра библиотека лайăх пурăнать теме çук. Экономикăн кăткăс лару-тăрăвĕ культурăра та палăрать.

Çакна пăхмасăр, централизациленĕ библиотека системи çулсерен 260-280 пин тенкĕлĕх çырăнать, ку вăл пирĕнни пек пысăк библиотекăшăн питĕ сахал. Кĕнекесем, уйрăмах учебниксем тата отрасль литературине туянма укçа кирлĕ, вĕсем питĕ кивелнĕ. Ялсенчи филиалсене пурте кирлĕ, шăпăртан тытăнса библиотекăри оборудовани таранах. Библиотекăсене компьютеризацилемелли вăхăт та тахçанах çитнĕ ĕнтĕ.

Çапах та библиотекарьсем малтанхи пекех оптимистсем-ха.

Майăн 27-мĕшĕнче ирхине 10 сехетре централизациленĕ библиотека системинче Пĕтĕм Раççейри Библиотекăсен кунне паллă тăвăпăр. Пĕр-пĕрне саламланă май, кĕнеке вулама юратакансене те çак чаплă уяв ячĕпе саламлатпăр. Ан тив, çав кун пуриншĕн те лайăх пултăр. Ырă сунса кĕтетпĕр.

**О.ВЕНИДИКТОВА,**
**ЦБС директорĕ,**
**М.ГИМРАНОВА,**
**методист.**

# Саламлатпăр!



**Чăваш Менчи ялĕнче пурăнакан юратнă мăшăра, аттене, асаттене Петр Сидуллович Сапожникова 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми вăй-хăват, тулли телей сунатпăр.**

**Мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕсем.**

*Улах юррисем*

## Пĕр курнă чух, тусăм, калаçар-ха

Чӳречĕрсем çинче ылтăн тура -
Элле урăх турăп, элле çук.
Пĕр курнă чух, тусăм, калаçар-ха:
Элле урăх курăп, элле çук.

Ыйхăмах та килет куçăм тулли -
Таянам-и, тусăм, сан çине?
Таянасшăн эпĕ каламастăп:
Икĕ куçăм ӳкрĕ сан çине.

Хура пурçăн тутрин çӳçи вăрăм,
Çавăрса çыхасчĕ мăй тавра.
Пирĕнех савнисем пит аякра,
Çавăрса килесчĕ куç умне.

Утçăм хушка пуçлă пулас пулсан,
Ял тавра çиччĕ çавăрнăттăм.
Хамăн савни хама пулас пулсан,
Кашни кунах çыру çырăттăм.

Асаттеçĕм атлас, ай, тăхăннă,
Арки-çанни çĕртен сĕтрĕнет.
Ан хуйхăр-ха, пуçăм, ан йĕр, куçăм,
Ăрăскалăм çĕртен сĕтрĕнет.

**Пухса йĕркелекенĕ**
**Е.ИЛЮШКИНА.**

## Хăвна ху пулăш

**"Пилот и К" фирма - ТОС (çинçе органика синтезĕ) АО регионри представителĕ пирĕн выставка - суту-илĕве пырса курма сĕнет. Эсир унта туянма пултаратăр:**

**АЦИДУМ-С**

**Гемопатически композици препарачĕ "Ацидум С" эрех нумай ĕçнипе организмра веществосем ылмашăвне тӳрлетет, токсинсем пуласссине сирсе ярать.**

**"Ацидум С" эрех нумай ĕçнипе чирлĕ çынсен веществосем ылмашăвне пăснине çеç тӳрлетмест, эрех-сăра енне ытларах туртăнакансене те профилактика тĕлĕшпе пулăшать.**

**Сиплев вăхăтĕнче эрех-сăра ĕçессинчен тытăнса тăма тăрăшмалла: организм çирĕпленсе çитсен эрех-сăра ĕçме юрать. "Ацидум С" эрех енне туртăнассине чарать, анчах та сывă çын пек эреххе пĕлсе кăна ĕçме май парать.**

**ВĔÇЕКЕН ЧĔКЕÇ**

**Сиплекен, сывлăха çирĕплетекен, тасатакан, начарлатакан чей.**

**Чей юнри липидсен шайне чакарать, çавна май организмра пуçтарăннă çу тăкакланать, юн артерийĕсем çине холестерин пуçтарăнассине сирсе ярать. Апат ирĕлтерекен органсен ĕçне йĕркелет, организма шлаксенчен тасатать.**

**Сиплекен свойствăсем:**

**- вар-хырăма, пыршăлăха тасатать;**
**- организмран шлаксене кăларать, виçене йĕркелет;**
**- шыçăсене хирĕç кĕрешме пулăшать;**
**- пĕвере, вата тасатать;**
**- сосудсен, юн стенкисем çинчи çăва чакарать;**
**- лимфа системине тасатать;**
**- пӳрене, сыпăсене тасатать;**
**- ӳт-тире çирĕплетет.**

**Пирĕн хаксем сирĕн кăмăлăра кайĕç. Свидетельство номерĕ - 30572, ИНН 165002669510, Çыранçă Чаллă хулинче панă.**

**Выставка-суту-илӳ 94-мĕш номерлĕ тĕп аптекăра майăн 26-мĕшĕнче 10 сехетрен тытăнса 13 сехетчен пулать.**

# ПĔЛТЕРӲСЕМ

*Пĕчĕк çемье пурăнмалли хваттер (пĕр пӳлĕмлĕ хваттер) сутăн илетĕп. 15 тонна тиев турттарма пултаракан МАЗ-500, чугун çул çывăхĕнчи магазина аренда паратăп е сутатăп. ВАЗ-2121 "Нива", ВАЗ-2108, хула варринчи 2 пӳлĕмлĕ хваттере васкавлă сутатăп. Тĕрлĕ майсем пулма пултараççĕ. Телефон: 5-25-35 е ГАИ çывăхĕнчи СТОра ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*60 лет Октября урамĕнчи 5-мĕш номерлĕ çуртра икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-22-90.*

* * *

*Кăрмăшри пур енчен те хăтлă икĕ пӳлĕмлĕ хваттере (3-мĕш хутра) сутатпăр. Адрес: Советская урамĕ, 183-69, 17 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Çурçĕр-Хĕвелтухăç микрорайонĕнче гаражлă çĕр участокĕ тата 3х5 метрлă çуна çинчи гараж сутăнаççĕ. Адрес: Лихачев урамĕ,9.*

* * *

*Нурлатри райпон хатĕрлев кантурне ĕçлеме электрик тата ГАЗ-66 автомашина водителĕ кирлĕ. Адрес: Куйбышев урамĕ, 98.*

* * *

*Организаци ПЦ-400Д-20 цемент сутать. Укçана алăран тӳлемелле, 1 миххин (50 килограмм) хакĕ 19 тенкĕ. Нурлат хулинчи телефон: 2-29-37, 7 сехетрен пуçласа 17 сехетчен шăнкăравламалла, кану кунĕ - вырсарникун.*

* * *

*Кăрмăшра пĕр пӳлĕмлĕ хваттер, усă курнă лайăх шайри сĕтел-пукан: 4 алăклă шкап - 1500 тенкĕ, кухня пеналĕ - 500 тенкĕ, трельяж - 500 тенкĕ, хура-шурă кăтартакан телевизор - 350 тенкĕ, сĕтел-тумба - 500 тенкĕ; тасатакан сооруженисем çывăхĕнчи гараж - 8 пин тенкĕ сутатпăр. Адрес: Пионерская урамĕ, 36.*

* * *

*СПТУ çывăхĕнчи çĕнĕ çуртри пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-42-31, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*1990 çулта туса кăларнă ВАЗ-2183 сутăнать, 5 сыпăклă КПП. Адрес: Школьная урамĕ, 11-30, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Тимĕрпе бетон гаража куçарма сутатпăр. Адрес: Кооперативная урамĕ, 4-19, телефон: 2-12-18.*

* * *

*Çĕнĕ ВАЗ-2106, тĕсĕ "сенкер çурçĕр", ВАЗ-2108 "рубин" сутатпăр. Адрес: Заводской тăкăрлăкĕ, 5-17.*

* * *

*Полевая урамĕнчи 18-мĕш номерлĕ уйрăм çурта 1 пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр е сутатпăр. Шыв, мунча пур, пăспа ăшăтмалла, телефон: 5-19-10.*

* * *

*1989 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108 сутăнать. Телефон: 5-29-63, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*Первомайская урамĕнче уйрăм çурт сутăнать. Ключи поселокĕнчи Тагир Усмановран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Хула варринче пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Пушкин урамĕ, 45-8.*

* * *

*Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Московская урамĕ, 5-45, 17.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

## Тавар туянакансем!

***"Техника"магазин Сире "Стинол" тата "Норд" холодильниксем сĕнет. "Стинол" холодильнисем - Итали дизайнĕ, шанчăклă, усă курма питĕ меллĕ. Холодильниксен сивĕтекен камерисене ирĕлтерекен автомат системипе тивĕçтернĕ. Ирĕлтерес темесен "Пăссăр" системăллă е 2 компрессорлă "Стинол" туянăр. Эпир çаплах кĕпе-йĕм çăвакан машинăсем, "Индезит", "Ардо", "Аристон" газ плитисем сĕнетпĕр. Тӳлевсĕрех леçсе паратпăр. Магазинта Европăпа Азири чаплă тухнă фирмăсенче туса кăларнă телевизорсен, видеомагнитофонсен, автомагнитолăсен, радиотелефонсен, видеокамерăсен, пылесоссен анлă ассортименчĕ пур. Сире эпир "Техника" магазинĕнче 2-мĕш хутра кĕтетпĕр. 2-14-30 номерлĕ телефонпа заказ пама пултаратăр.***

**Аксури вăрман хуçалăхĕ хăма, шăтăрнак, арболит блокĕсем, никĕс блокĕсем сутать. Леçсе пама пултаратпăр. Тĕрлĕ калăпăшлă пурасем тума заказсем йышăнатпăр. Аксури вăрман хуçалăхĕнче е (8-244) 2-14-32, 2-11-92 номерлĕ телефонсемпе ыйтса пĕлмелле.**

**Апат-çимĕç пасарĕ çывăхĕнче лайăх гараж сутăн илетĕп (НГДУ ЖКХ çывăхĕнчине сĕнмелле мар). Телефон: 3-52-82, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

*Заказсем йышăнатпăр: хура мрамор постаментпа пĕрле, хĕрлĕ гранит постаментпа пĕрле. 100х50х10 сантиметрлă, сăнӳкерчĕкпе тата текстпа.*

*Уйăх хушшинче туса паратпăр. Хакĕ 5 пин тенкĕрен пуçласа 8 пине çити. Адрес: Ленинградская урамĕ, 14, телефон: 5-37-39. Свидетельство номерĕ - 324.*



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хут тухать - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, явапллă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860. Заказ № 2185